Туссем калаçнă чух, тăван чĕлхемĕм,
Шур акăш тĕкĕ евĕр эс çемçе.
Санпа ман халăх чунĕ те илемĕ
Çӳрет çӳлте те çĕр çинче вĕçсе.

Ухсай Яккăвĕ.

Чăваш чĕлхи — тăван чĕлхе,
Вăл пирĕншĕн ĕмĕрлĕхе.
Вăл ĕлĕкхи, чи авалхи
Мăн асаттемĕрсен чĕлхи.
Эппин, сыхлар ăна, упрар,
Типсе хăрмашкăн парар мар.
Чĕлхе пĕтсен пĕтет чăваш,
Уйла кăштах, шутла, юлташ!

Мĕтри Мишши.

Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,
Шăпчăк та юрлать кунта, ав, чăвашла.
Пин чĕлхеллĕ туслă халăх хушшинче
Калаçса çӳретĕп эпĕ - чăвашла.

Любовь Мартьянова.

www.korolevstvo-masterov.ru www.korolevstvo-masterov.ru www.korolevstvo-masterov.ru

**Чăваш чĕлхи - чĕкеç чĕлхи,**
**Мĕн пур унтан çепĕçреххи?**
**Унпа вĕрентĕм калаçма,**
**Пуçларăм сăвăсем çырма.**
**Чăваш чĕлхи - анне чĕлхи,**
**Мĕн пур унтан хитререххи?**
**Унпа ăнлантăм пурнăçа,**
**Унпа эп уçрăм куç-пуçа.**
**Юратрăм хамăн чĕлхене,**
**Чăваш тумне, тĕррисене.**
**Чĕлхем çухалмĕ ĕмĕрне,**
**Вăл упрĕ халăх пĕрлĕхне.**

**Валентина Деменкова.**

Чăваш чĕлхи…
Пирĕншĕн вăл асаттесен пехилĕ,
асаннесен кĕлли,
Пирĕншĕн вăл вăрман сулхăнĕ,
тăп-тăрă çăлкуç шывĕ,
Пирĕншĕн вăл чĕре таппи,
чун хавалĕн чи ачаш хусканăвĕсем,
Пирĕншĕн вăл - пурнăç…

Геннадий Волков.

Тăван чĕлхе! Ĕмĕрлĕхе эс пурăн,
Атте-анне пек, эс пĕртен-пĕрре.
Ман саншăн хатĕр чи хисеплĕ вырăн,
Мухтав сана, тăван чĕлхемĕре!

**А.Юман.**

Чăваш сăмахĕ - пирĕн чăн çăл-
куçĕ
Шăнкăртатать вăл ĕмĕр-ĕмĕре.
Унпа кăна поэт хăйне çул уçĕ,
Унпа кăна вăл чĕрĕ тĕнчере.

П.Хусанкай.

*Чăваш чĕлхи –*
*ту пек тулли арча –*
*Сан иксĕлми тупру*
*пурин валли те çитнĕ, çитĕ те.*
*Кунран-кун – хаклăрах,*
*кунран-кун – аслăрах.*
*Пурнар, чĕлхем,*
*тăван чĕлхем, пурнар!*

*Валерий Туркай*

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе,
Эс чи пахи, эс – чун уççи.
Тăван чĕлхе – ĕмĕрлĕхе,
Пин чĕлхерен чи çепĕççи.

Çак чĕлхепе эп калаçатăп,
Куллен çыратап та вулатап,
Çак чĕлхепе эп мухтанатăп,
Куллен-кунах ăса туптатăп.

Тăван чĕлхе, тăван сăмах,
Сана упратап чĕрĕмрех.
Мана вăй кӳрен яланах,
Тăван чĕлхе ĕмĕрлĕхех!

Тăван чĕлхе! Эп сансăр - мĕскĕн, тăлăх,
Эс пур чух - манăн кăкăрта кăвар.
Эс пур чухне çеç вилĕмсĕр ман халăх,
Ун чух ун çут пуласлăхĕ çук мар.

Анатолий Юман.

Вырăсла та калаçар,
Чăвашла та сăмахлар,
Иккĕшĕ те халь вĕсем
Чуна çывăх чĕлхесем.

Эс чĕрери нихçан сӳнми
хĕлхем,
Янравлă та хитре тăван
чĕлхем.
Чăваш чĕлхи, эс иксĕлми
пуян,
Сан анлăшу - хăватлă океан.

Александр
Тимбай.

Атте-анне чĕлхи, çиç ĕмĕр!
Эп сансăр — хăрăк тунката...
Чĕлхе пулсассăн та
ЧĔЛХЕСĔР,
Эп СУККĂР, куç пулсассăн та.

Александр Савельев-Сас.